## ЧУНĂМ!

Çӳре-çӳре ыванна хыççăн пăртакçă кансан пуçăма поэзи шухăшĕсем килсе кĕркелеççĕ.

Сап-сарă çулçăсем вĕçсе
Йĕпеннĕ çул çине ӳкеççĕ.
Юратнă тусăмçăм инçе, —
Пăхса тăратăп пĕр-пĕчченçĕ.

Автан киккирикки пекех
Пилеш хĕрелнĕ хыççăн.
Çӳреттĕмĕр хир тăрăх тек,
Юратнă тусăм, çырă куçăм!

Лăпланнă Атăла çăра
Тăхлан пек пĕлĕт ӳкнĕ майăн
Иртетчĕ ăшă кăнтăра
Кулянна кăмăллă хур кайăк.

Санран инçе, инçе паян,
Анчах ялан аса илетĕп.
Сар хăмăллă тăван уя,
Тăван яла, тăван киле те.

Куçа хупатăп, тĕлĕкре
Мана кĕтсе шавлать телейлĕ
Сар ылтăн çулçăллă, хитре,
Тĕтреллĕ Шупашкар аллейĕ.

Эсĕ Элкер старик çĕнĕ хватере куçса кайни çинчен çыратăн — паллах, лăпкă кăмăллă этем канмалли шăв-шавсăр вырăн шыранă ĕнтĕ. Эсĕ тĕл пулсан, çакă пĕчĕкçĕ сăввăма ăна вуласа пар.

Сана куратăп тĕтĕм витĕр,
Кĕрхи сар ылтăнлă Карпат!
Вăрçă сасси татти-сыпписĕр,
Самант канмасăр янăрать.

Чĕркуç таран тăмланнă атă.
Çири шинелĕм йĕп-йĕпе.
Тара кайсассăн та утатăп
Элкер салтакăн çулĕпе.

Икĕ сăввине те ху аллупа куçарса çыр та альманаха пар. Шупашкар поэчĕсен кăшкăрашуллă хорĕнче çакă пĕчĕкçĕ икĕ сăвă чипер çеç вырăн йышăнма пултараççĕ.

Салампа — килне таврăнма çунакан
мăшăру Ухсай Яккăвĕ

Октябрĕн 14, 1944

P.S. Эпĕ сана тахçанах сăвăсем ярса панăччĕ. Вĕсене ăçта пулин те йышăнчĕç-и? Ман Тутимĕр Шупашкарта вырăсла калаçма хатĕрленнишĕн питĕрех те савăнатăп.